# Николай Симуновӑн «Пурнӑç юмах мар» кӗнекери сыпӑк тӑрӑх хатӗрленӗ презентаци

Презентацие хатӗрлекенӗ

Аччари вӑтам шкулта чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен Давыдова Оксана Михайловна

Аннесем! Мĕн кăна шухăшламастăр-ши эсир пулас ачăр варта ӳтленсе аталаннă вăхăтсенче?



Эсир çуратнă ача  мухмăр сĕрĕмĕпе  чĕтресе сĕлекине çăтса çӳремĕ , хулпуççи таран çӳç айне путнă катемпи пек тĕршĕнсе, çĕçĕ тытса хăратса-хăмсарса та çӳремĕ.









Аннесем! Сирĕн пек кам хĕпĕртеме пĕлет пысăк тунсăхпа кĕттернĕ чун çут тĕнчене тухса кăшкăрса ярсан!



Аннесем!

Хăвăр ачăрсемшĕн нимĕн те хĕрхенсе тăрас çук эсир …



Аннесем! Калăр-ха  çапах та, кам çуратса ÿстернĕ  çав хăш-пĕр çапкаланчăксене, этем чысне тивĕç мар апăршасене?










Чĕнместĕр эсир, аннесем!

Мĕншĕн тесен  унашкаллисене эсир çуратман.

Эсир çуратнă ача хĕвелпе танах пулнă.



Ачаш чĕреллĕ аннесем!
Ан хупăр куçăрсене, ан пăрăнăр вĕсенчен! Сирĕн суккăр юратăвăр çитĕнтернĕ калчасем вĕсем!







Ан тарăр вĕсенчен, çуралнă хыççăнхи пекех, çĕнĕрен алла илĕр...

Мĕншĕн ҫынлăхран тухса, этем чысне ҫухатса ӳсни ҫинчен шухăшлăр, ҫын ҫинче ҫын тивĕҫне юрăхлă тума тăрăшăр, сирĕн тертлĕ кунăрсем харама ан кайччăр!



Ваттисем калашле,

ача-пăчана  çуратса янипе

çырлахмалла мар çав.